26-мĕш çул тухать; Хакĕ 20 пус

1943 НОЯБРЬ 10 ЮНКУН 223(6460) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ. № 309. Мускав хули.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкăсем! Совет Союзĕнчи ĕç çыннисем!

Совет Правительстви тата пирĕн большевиксен партийĕн ячĕпе Сире Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин 26 çул тултарнă майпа саламлатăп.

Пирĕн Социализмлă Аслă Революцин 26 çул тултарнине эпир Хĕрлĕ Çар пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене çĕнтерсе пынă чаплă кунсенче уявлатпăр.

Икĕ çул ытла ĕнтĕ пирĕн халăх нимĕçсен фашистла пусмăрçисене хирĕç ирĕклĕхшĕн вăрçă туса пырать. Пĕр çул хушшинче пирĕн Тăван çĕршыв йывăр кунсем тÿссе ирттернĕ. Тăшман вăл вăхăт тĕлне пирĕн пысăк территори тытса илнĕ. Совет çыннисен миллионшăн-миллионшăн нимĕç чуралăхĕнче асапланатчĕç. Тăшман кĕтĕвĕсем, Мускава Хĕвелтухăç енчен çавăрса илме ĕмĕтленсе, Атăл çине тата тухасшăн талпăнатчĕç. Кавказ лешĕнче пымалли çуле тапăнса пычĕç. Анчах та пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйĕн кăкăрĕпе тăшман çулне пÿлсе лартрĕ. Пирĕн çарсем ют çĕртен килнĕ вăрă-хурахсен кĕтĕвĕсене чарса лартрĕç, унтан вара вĕсене Сталинград патĕнче çĕмĕрсе тăкса, Хĕвеланăçнелле çи тери хăвăрт хăвалама кĕрĕç. Çав хăтарнă вара Хĕрлĕ Çар вăрçă çĕнчи пусăрулăха пĕрмаях хăй аллине тытса илет.

1942—43-мĕш çулсенчи хĕлле пирĕн паттăр çарсем нимĕçсен, итальянсен, румынсен, венгерсен чи лайăх çарĕсене аркатса тăкрĕç, тăшмансен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр миллион çынна ытла тĕлерсе пĕтерчĕç тата тыткăна илчĕç, хамăр çĕршывăн пысăк территорине ирĕке кăларчĕç.

1943-мĕш çулхи çулла Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнĕрен аркатмалла пысăк çапрĕ. Пирĕн çарсем темиçе кун хушшинче нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартрĕç, çапла вара Гитлерăн планне — Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене çĕмĕрсе тăкмалла тата Мускава Орелпа Курск енчен çавăрса илмелли планне таптаса парахрĕç. Кунтан та ытларах, Хĕрлĕ Çар хăй татăклă наступлени пуçласа ячĕ, тăшманăн хăватлă оборона тăрăхĕсене çĕмĕрсе тăкса, виçĕ уйăх хушшинче тăшмана Хĕвеланăçнелле вырăнĕ-вырăнĕпе 400—450 километр таран сирсе ывăтрĕ. Çуллахи кампани вăхăтĕнче пирĕн çарсем тăшмана Украинăн Днепр шывĕн сулахай енчи таккишĕнчен, Донбасран, Таманьрен, Орел облаçĕнчен, Смоленск облаçĕнчен хăваласа кăларчĕç те Украинăн Днепр шывĕн сылтăм енчи таккишне пырса кĕчĕç, совет Украинин столицине Киев хулине тытса илчĕç, Белорусси территорине пырса кĕчĕç, Крыма пымалли вырăнсене тытса илчĕç, 160 хула ытла тата халăх пурăнакан 38 пин пункта ытла ирĕке кăларчĕç.

Тăшман пирĕнтен вăхăтлăха тытса илнĕ совет çĕрĕн ⅔ пайне çити Хĕрлĕ Çар иртнĕ çул хушшинче каялла тытса илчĕ, темиçе вунă миллион совет çыннине нимĕç чуралăхĕнчен ирĕке кăларчĕ.

Иртнĕ çул хушшинче, нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хăйсен 4 миллион ытла салтакĕпе офицерне çухатрĕç, вăл шутран 1.800.000 çынран кая мар вĕлерсе пĕтерне.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕçсен фашистла çарĕн суйласа илнĕ кадрăвăй дивизийĕсене пĕтерсе тăкнă. Çав дивизисене пĕтерпе гитлеровецсен пĕтĕм тĕнчене çавăрса илмелли тата мĕнпур халăхсене чуралантармалли планĕсене ĕмĕрлĕхех тĕп туса хунă.

Чăн та, нимĕç çарĕ халĕ те вăйлă çапăçать, вăл кашни рубежрах тытăнса тăма тăхтанать. Анчах та пирĕн çарсем Сталинград патĕнче аркатса тăкнă хыççăн нимĕçсем тÿссе ирттерсе пыракан пораженисем нимĕç çарĕн çапăçу вăйне хавшатса ячĕç. Халĕ нимĕçсем вĕсене çавăрса илессинчен хăраççĕ; вĕсене хăрушлăх палăрсан, хăйсен техникипе амакнă салтакĕсене çапăçу хирĕнче пăрахса тарма тăрăшаççĕ.

Иртнĕ çул хушшинче наступлени çапăçăвĕсенче пирĕн çарсем халхин вăрçа туса пымалли опытпа пуянланнă. Пирĕн офицерсемпе генералсем çарсене вĕçсе ертсе пырас искусствăна ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ. Хĕрлĕ Çар ку чухнехи пиçĕнсе çитнĕ тата çапăçура пулса тăчĕ.

Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсем Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăравне тата та ытларах çирĕплетрĕç. Пирĕн çарсен наступленийĕ союзниксен çарсене Çурçĕр Африкăра, Итали утравĕсем çинче тата Италин кăнтăр пайĕнче çĕнтерÿллĕн çапăçса пыма пулăшса тăчĕ. Пирĕн союзниксен авиацийĕ Германин промышленноçĕ центрĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахса тăчĕ. Иккĕленмелли çук, Хĕрлĕ Çар нимĕç çарĕсене Хĕвелтухăçĕнчи пыра-пыра çапнине союзниксен тĕп вăйĕсем Хĕвеланăçĕнчи пыра-пыра çапнине пулăшнипе çапла вăл гитлерла Германи хăйĕн вăрçине аркатса тăкасси патнелле пырать. Гитлера хирĕç коалицийĕ пуçăхĕпех çĕнтересси патне илсе çитерет.

Пĕтĕм халăх фронта пулăшса тăма пулăшать. Хĕрлĕ Çар çак çулхи тума пулăшнипе пулнă. Совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне хăйĕн Хĕрлĕ Çарне пулăшма парать. Хĕçпăшалпа боеприпассем, апат-çимĕçсемпе тумтирсем фронталла татти-сыппипсĕр ăсанса тăраççĕ. Уралпа Кузбасс, Мускавпа Атăл тăрăхĕ, Ленинградпа Баку, Касахстанпа Узбекистан, Грузипе Армени, пирĕн мĕнпур республикăсемпе облаçсем Хĕрлĕ Çарăн чи хăватлă арсеналĕсем пулса тăчĕç. Совет халăхĕ тăшманран туртса илнĕ промышленноçпа ялхуçалăх районĕсене ăнăçлăн юсаса пырать, фабрикăсемпе заводсене, шахтăсемпе чугун çулĕсене ĕçе ярать, совхозсемпе колхозсене çĕнĕрен чĕртсе ура çине тăратать, ирĕке кăларнă районсен ресурсĕсене фронта пулăшнă çĕре ярать.

Пирĕн çитĕнÿсем чăннипех питĕ те пысăк ĕнтĕ. Анчах та тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларни айванла ĕç пулнă пулĕччĕ. Халĕ Хĕрлĕ Çар тăшмана Днепрăн лешьенче çĕмĕрнĕ вăхăтра, вăл пирĕн тăван çĕршывăн Хĕвеланăçĕнчи чиккисем патнелле çĕнтерсе пынă вăхăтра йăваш чунлă пулни, лăпланса ларни, малашнехи çапăçусен йывăрлăхĕсене хакламанни уйрăмах хăрушă ĕç пулнă пулĕччĕ. Халĕ тăшман хăй вăхăтлăха туртса илнĕ территорин кашни лаптăкĕшĕн урса кайсах хаяррăн çапăçать, мĕншĕн тесен пирĕн çар малалла ярса пуснă кашни утăм нимĕçсене вĕсем пирĕн çĕршывра тунă тискер ĕçсемшĕн тавăрас сехете çывхартса пырать.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех çĕнтерессишĕн пыракан çапăçу пирĕн çарпа халăхран татах та ытларах вăй хурса кĕрешсе паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума ыйтать.

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, сержантсем, офицерсемпе генералсем, партизансемпе партизанкăсем!

Ылханлă тăшмана хирĕç пыракан аслă çапăçусенче эсир пысăк çĕнтерÿсем турăр, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боевой ялавĕсене ĕмĕрлĕхе чапа кăлартăр. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн халĕ ĕнтĕ совет çĕрне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен сывăх вăхăтрах пĕтĕмпех ирĕке кăларма пур майсем те пур.

Пирĕн Тăван çĕршыв нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене çĕнтерес ятпа ÇАПЛА ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

1. Рядовойсемпе сержантсен пĕтĕм составĕн — хăйсен çапăçури ăсталăхне ывăкма пĕлмесĕр лайăхлатса пымалла, уставсемпе наставленисем ыйтнисене, командирсемпе начальниксен приказĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла, яланах тата пур çĕрте те кăтартуллă йĕрке, çирĕп дисциплина, пысăк организованность тытса пымалла.

2. Мĕнпур йышши çарсен офицерĕсемпе генералĕсен—çарсене çапăçу хирĕнче ертсе пырас ĕçе тата мĕнпур йышши çарсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса пырас ĕçе лайăхлатсах пымалла, наступленире тунă çитĕнÿсене вăйлăн çирĕплетсе хăвармалла, тăшман çарĕсене хăвăрттăн йĕрлесе хăваласа пымалла, тыла хăвăртрах фронт лини патнелле куçарса пымалла, тăшмана çĕнĕрен пыра-пыра çапнă çĕрте резервсемпе хăюллăнрах усă курмалла.

3. Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн — тăшман оборонине хăюллăн та татăклăн çĕмĕрсе пымалла, тăшмана хушăри рубежсенче чарăнса тăма вăхăт памасăр ăна кунĕн-çĕрĕн хăваласа пымалла, пĕлсе те хăюллă маневрсем туса, тăшманăн çулĕрĕсене тататата пăрахмалла, тăшман çарĕсене çавăра-çавăра илсе вакласа пĕтермелле, тăшманăн сыннисемпе çар техникине пĕтерсе тăкмалла, тытатыта илмелле.

4. Партизансемпе партизанкăсен — нимĕçсене хирĕç совет çыннисене алла хĕçпăшал тытса çапăçма çĕклемелле, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пур майпа та пулăшса пымалла, тăшманăн тылĕсемпе штабĕсене арката-арката тăкмалла, совет çыннисене вĕлерсе пĕтересрен тата Германие каторгăна хăваласа каясран хăтарса хăвармалла, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла!

Хĕрлĕ Çар воинĕсем, партизансемпе партизанкăсем! Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тĕппипех аркатса тăкассишĕн—малалла!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 26 çул тултарни сывă пултăр!

Пирĕн çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар сывă пултăр!

Пирĕн çĕнтерÿллĕ Тинĕс-Çар флочĕ сывă пултăр!

Пирĕн паттăр партизансемпе партизанкăсем сывă пулччăр!

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене — хаяр тавăру та вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе СССР Наркомчерметĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Хура металлурги Халăх Комиссариачĕ комсомол организацийĕсен металлурги завочĕсене тимĕр-тăмăр парса тăрассишĕн пынă социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулти виççĕмĕш квартăлти итогĕсене пăхса тухнă.

Хусан чугун çулĕн Улатăр станцийĕнчи ВЛКСМ комитетне (секретарĕ Рябчиков юлташ) тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине тата 10.000 тенкĕ премине памалла тунă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Хура металлурги Халăх Комиссариачĕ комсомолăн облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи организацийĕсем лайăх ĕçленине палăртнă. Вăл шутра комсомолăн пирĕн республикăри организацийĕ те пур.

Вăрçă ĕçне юратса вĕренеççĕ

Канашри педагогика училищинчи комсомолецсемпе çамрăксем вăрçă ĕçне юратса вĕренеççĕ. Ку тĕлĕшпе кăçал кунта ятарласа уйрăм пÿлĕм тунă. Унта военрук Н. Платонов Хĕрлĕ Çарăн паттăр ĕçĕсем [illegible] тата ытти оборонăллă темăсемпе те час-часах калаçусем ирттерет. Çар ĕçне вĕренмелли уроксем те çак пÿлĕмрех пулаççĕ. Унта плакатсемпе макетсем те çителĕклех хатĕрленĕ.

Кунсăр пуçне, училищĕре стрелковăй кружок лайăх ĕçлет. Ăна та [illegible]атонов юлташ ертсе пырать. Ачасем занятие пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Халиччен виçĕ заняти пулса иртнĕ. Кружок членĕсене взводсемпе отделенисене уйăрнă. Вĕренÿ отличникĕсем — вĕсен командирĕсем.

И. МАКСИМОВ.

Унăн Превосходительствине Михаил Калинина, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ 26 çул тултарни кăçал ирĕклĕхе юратакан халăхсем хăйсене чуралантарма тата пусарма хăтланнă тăшмана пур çĕрте те татăклăн пыра-пыра çапнă тапхăрпа пĕр вăхăтра килет. Пĕрлешÿллĕ нацисен членĕсем çапăçу хирĕнче тата пĕрпĕринпе тачăрах çыхăнса ĕçлесе, пĕр тĕллеве пурнăçласа пырса, агрессие вăйĕсене парăнасси патне хăваласа пыраççĕ.

Çак кун эпĕ Сире тата Совет Союзĕн халăхĕпе çулпуçĕсене саламлатăп, тата Хĕрлĕ Çар захватчика каялла ывăтса янă стильпе, калама çук лайăх стильпе хам тата манăн çĕршыв халăхĕ çав тери хĕпĕртени çинчен каласа паратăп.

Хĕрлĕ Çара тата Совет Союзĕн халăхне ĕмĕр-ĕмĕр чыс та мухтав. Вĕсем тиранипе пусмăрлăха хирĕç кĕрешес ĕçре историе нихăçан мăнăça тухми страницăсем çырса хучĕç. Вĕсен примерĕ тата вĕсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр кĕрешни çĕнтерÿшĕн пĕрлешсе кĕрешекен мĕнпур вăйсене хавхалантараççĕ.

Нумаях пулмасть Мускавра тунă килĕшÿсенче тата уççăнтарах палăртнă пĕрлĕх майлă ĕçлесе, пĕр-пĕрне ăнланнинчен, шаннинчен тата пĕрпĕринпе активлăн çыхăнса ĕçлениннчен тухса тăракан вăйсемпе ĕçлесе, пĕрлешÿллĕ нацисем агресси вăйĕсене çĕмĕрсе тăкĕç тата вăраха пыракан мир туса хурса, ăна сыхласа усрĕç.

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.

Михаил Иванович Калинина, Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Октябрьти революци 26 çул тултарни мана Чехословаки халăхĕпе унăн правительстви ячĕпе Сире нации праçникĕ кунĕнче эпир пĕтĕм чĕререн кăмăллани çинчен тепĕр хут каласа пама май парать. Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур граждансем хăйсен çĕршывне хÿтĕленĕ çĕрте калама çук вăйлăн ĕçлени пире пĕрлехи тăшманпа кĕрешес ĕçре хавхалантараççĕ тата çĕнĕ вăй параççĕ. Октябрьти аслă революци уявĕ ячĕпе Сире саламланă çынсем çумне эпе питĕ хавасланса хутшăнатăп, хам ятпа тата Чехословаки халăхĕ ячĕпе Сире тăшмана часрах тата пĕтĕмпех çĕнтерме сунатăп.

Д—р ЭДУАРД БЕНЕШ.

Унăн Превосходительствине Михаил Иванович Калинина, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн наци уявĕ мана паян Сире хавхалантаракан савăнăçпа саламлама тата Сирĕн Превосходительствăна пĕтĕм чунтан-чĕререн саламлама телейлĕ май парать. Эпĕ Сирĕн Превосходительствăна пĕтĕм чĕререн телей сунатăп тата аслă та паттăр нацие, туслă та союзлă нацие тăшмана çĕнтерме тата чечекленсе ÿссе пыма сунатăп, çав нацин паттăр Хĕрлĕ Çарĕ çав тери нумай тĕлĕнмелле япаласем кăтартать, çав тери нумай патриотла жертвăсем тÿсет.

МОХАМЕД РЕЗА ПЕХЛЕВИ.

Маршал Сталин господина,

МУСКАВ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн наци уявĕ майĕпе (унăн çĕнтерсе пыракан çарĕсем халь ирĕклĕхшĕн татăклăн кĕрешеççĕ) эпир, Маршал Сталин, Франци ячĕпе Сире хăвăра, çавăн пекех тата Совет Союзĕн правительствине, командирĕсене, салтакĕсене тата халăхĕсене ырă суннине ĕненме ыйтатпăр.

ДЕ ГОЛЛЬ,
ЖИРО.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

Украинăри 1-мĕш фронтăн çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, паян, ноябрĕн 7-мĕшĕнче, **Рыбалко** генерал-лейтенантăн танковăй çарĕсем çав тери хăвăрт пырса çапнипе **Фастов** хулине, чугун çулсен пысăк тĕвви тата нимĕçсен кăнтăр-хĕвеланăç енчи оборонин операци тĕлĕшпе паха пункчĕ пулса тăракансене, тытса илнĕ.

Çапла вара, нимĕçсен **Киев** патĕнчи çарĕсен группировкине **Кривой Рог** хули патĕнчи группировкипе çыхса таракан тĕп чугун çула татса пăрахнă.

Фастов хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче çаксем уйрăмах чапа тухнă: танковăй çарсен генерал-майорĕн **Панфиловăн** 6-мĕш гвардейски Киевски танковăй корпусĕ, **Якубовский** полковникăн 91-мĕш уйрăм танковăй бригади, **Михайлов** полковникăн 22-мĕш гвардейски мотострелковăй бригади, **Новохатько** подполковникăн 51-мĕш гвардейски танковăй бригади, **Плешко** подполковникăн 52-мĕш гвардейски танковăй бригади, **Архипов** полковникăн 53-мĕш гвардейски танковăй бригади тата **Басов** подполковникăн 1893-мĕш хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе **Фастов** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăссене **„Фастовски"** тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăссене çапла чĕнмелле тăвас:

91-мĕш Фастовски уйрăм танковăй бригада,
22-мĕш гвардейски Фастовски мотострелковăй бригада,
51-мĕш гвардейски Фастовски танковăй бригада,
52-мĕш гвардейски Фастовски танковăй бригада,
53-мĕш гвардейски Фастовски танковăй бригада,
1893-мĕш Фастовски хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери полкĕ.

6-мĕш гвардейски Киевски танковăй корпуса, нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 7-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици **Мускав Фастов** хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене, çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, **Фастов** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **тав тăватăп**.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—**вилĕм!**

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРЕН 6-МĔШЕНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çав тери вирлĕн малалла тапăнса пырса тата тăшмана çавăрса илмелли хăюллă маневр туса, хăйсене хирĕç тăракан нимĕç çарĕсене аркатса тăкнă та ноябрĕн 6-мĕшĕнче, тул çутăлса килнĕ вăхăтра, Совет Украинин столицине—КИЕВ хулине штурмласа тытса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника енчен питĕ пысăк çухату кÿнĕ.

Ăнăçлă наступлени туса пырса, çав фронтри çарсем Киев облаçĕнчи район центрне — ВАСИЛЬКОВ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ЛУБЯНКА, ОЗЕРЫ, ГОСТОМЕЛЬ, БЛИСГАВИЦА, БУЧА, ЯБЛОНКА, СОФИЕВСКАЯ, НИКОЛЬСКАЯ БОРШАГОВКА, ШЕВЧЕНКО, ПЕТРОВСКИЙ, ЖУЛЯНЫ, МЫШЕЛОВКА, КРОКОВЩИНА, ГАТНОЕ, ХОТИВ, ПИРОГОВО, ВИТА ЛИТОВСКАЯ, ЗАБОРЬЕ, БОЯРКА-БУДАЕВКА, ТАРАСОВКА, ЮРОВКА, ВЕТА ПОЧТОВАЯ, ГЛЕВАХА ятлă ялсем тата БУЧА, ЖУЛЯНЫ, БОЯРКА ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

Çак кунсенче ÇУРÇĔР КАВКАЗ фронтĕнчи çарсем, ХУРА ТИНĔС флочĕпе тата АЗОВ ТИНĔСĔНЧИ çар флотилийĕпе килĕшсе, десант антарас тĕлĕшпе ăнăçлă операци туса ирттернĕ, КЕРЧЬ заливĕн хĕвелтухăç çыранĕнче КЕРЧЬ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри тата кăнтăртарахри районсенче çарсем антарнă. КЕРЧЬ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса, тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ ОССОВИНА, МАЯК, ЖУКОВКА, ОПАСНАЯ КРЕПОСТЬ, ЕНИКАЛЕ, БАКСЫ, КАПКАНЫ ятлă тĕреклетнĕ пунктсене тытса илнĕ, çапла вара çав районра пирĕн çарсем 10 километр сарлакĕш те 6 километр тăршшĕ плацдарм тунă. КЕРЧЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн десант чăсĕсем тăшмантан вăйлă çирĕплетнĕ ЭЛЬТИГЕН ятлă пункта тытса илнĕ. Тăшман пирĕн десант чăçĕсене хирĕç темиçе контратака та тунă. Пирĕн чăссем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухату кÿнĕ.

НИКОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ДНЕПР шывĕн сулахай енче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника енчен пысăк çухату кÿнĕ.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшманăн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă атакăсене сире-сире янă. Çав çапăçусенче тăшмана сынсемпе техника енчен питĕ пысăк çухату кÿнĕ.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче КРАСНОПОЛЬЕ, БУЛЫГИ, БОЛЬШОЕ СИТНО ялĕсем тата КЛЯСТИЦЫ, АЛЕША ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 141 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 57 самолетне персе ÿкернĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессине уçасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VI-мĕш Сессийĕ Шупашкарта 1943 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре Советсен çуртĕн залĕнче уçăлать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, наступлени туса пырса, ФАСТОВ хулипе пысăк чугун çул тĕввине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 70 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ВЛАДИМИРОВКА, МЛЫНОК, КАТЮЖАНКА, АБРАМОВКА, ФЕЛИЦИАЛОВКА, БАБИНЦЫ, МИКУЛИЧИ, ДАЧИ КЛАВДИЕВО, ДУБРОВА ЛЕНИНА, КОЗИНЦЫ, ХМЕЛЬНАЯ, КОЛОНЩИНА, ГАВРОНЩИНА, МАКОВИЩЕ, ПЕТРУШКИ, БЕЛГОРОДКА, БОБРИЦА, КНЯЖИЧИ, ЖОРНОВКА, КОЖУХОВКА, ПЛЕСЕЦКОЕ, КАЗЕННАЯ МОТОВИЛОВКА, РОСЛОВИЧИ, ГВОЗДОВ, МАЛАЯ БУДАЕВКА, БОЛЬШАЯ БУДАЕВКА, МАЛЫЕ ДМИТРОВИЧИ, БОЛЬШИЕ ДМИТРОВИЧИ, БЕЗРАДИЧИ ятлă пысăк пунктсем тата ВОРЗЕЛЬ, НЕМЕШАЕВО, КЛАВДИЕВО, ГЛЕВАХА, 1-МĔШ ВАСИЛЬКОВ, МОТОВИЛОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче ДЕРБИХА, ЛЕШНИ, ПРУДОК, АРТЕМОВКА, ДВОРИЩЕ, РЮМ ятлă ялсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 219 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 74 самолетне персе ӳкернĕ.

НОЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем, çаплах ăнăçлă наступлени туса пырса, Киев облаçĕнчи МАКАРОВ, БЫШЕВ, ОБУХОВ ятлă район центрĕсене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ГОРНАСТАЙПОЛЬ, ЛЮБЫДЗА, ВОРОПАЕВКА, ФЕНЗИЛИЧИ, ОЦИТЕЛЬ, ШИБЕНОЕ, БЕРЕСТЯНКА, ФИЛИППОВИЧИ, НОВАЯ ГРЕБЛЯ, АНДРЕЕВКА, ЛИПОВКА, КОПЫЛОВ, МОТЫЖИН, ЮРОВ, ФАССОВАЯ ЯСНОГОРОДКА, МОСТИЩЕ, ЧЕРНОГОРОДКИ, ДРОГИНЦЫ, ФАСТОВЕЦ, 1-МĔШ МАРЬЯНОВКА, 2-МĔШ МАРЬЯНОВКА, КСАВЕРОВКА, КОДАКИ, БАРАХТЫ, БОЛЬШАЯ ВИЛЬШАНКА, МАЛАЯ ВИЛЬШАНКА, ТРИПИЛЛЯ ятлă пысăк ялсем тата ТРИЛЕСЫ, КОЖАНКА ятлă чугун çул станцийĕсем пур.

КЕРЧЬ çурутравĕ çинче пирĕн çарсем, тăшман контратакисене сире-сире ярса, малтанхи районсенчех плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă.

НЕВЕЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри, районра пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 24 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нимĕçсен Киев патĕнчи çухатăвĕсем тата пирĕн трофейăсем

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн çарĕсем КИЕВШĂН пынă çапăçусенче ноябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа 6-мĕшне çитиччен нимĕçсен çак чаçĕсене ÇĔМĔРСЕ ТĂКНĂ: 68-мĕш, 75-мĕш, 82-мĕш 88-мĕш, 183-мĕш, 217-мĕш 323-мĕш, 327-мĕш тата 340-мĕш пехотнăй дивизийĕсене, 7-мĕшпе 8-мĕш танковăй дивизийĕсене тата 20-мĕш мотодивизине; пĕтĕмпе Киевшăн пынă çапăçусенче нимĕçсен 9 пехотнăй дивизине, 2 танковăй дивизине тата пĕр мотодивизие çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 15.000 виллине çити выртса юлнă.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн çарсем ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: 244 танк, 128 самолет, 174 тупă (вĕсенчен 48-шĕ—хăй тĕллĕн çӳрекеннисем), 158 миномет, 246 пулемет, 28 склад,

Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн çарсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: 30 самолет, 42 танк, 314 тупă (вĕсенчен 70-шĕ—хăй тĕллĕн çӳрекеннисем), 140 миномет (вĕсенчен 30-шĕ—ултă кĕпçеллĕ минометсем), 640 пулемет, 660 автомашина, çар хатĕрĕсем тиенĕ 700 лав, 2.000 лаша ытла, 18 радиостанци, хĕçпăшалсен, боеприпассен тата ытти çар пурлăхĕн склачĕсем — 34.

Нимĕçсен 6.200 салтакĕпе офицерне ТЫТКАНА ИЛНĔ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. 1.500 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 14 тупă, вĕсенчен 3-шĕ—хăй тĕллĕн çӳрекеннисем, 2 бронемашина, 5 бронетранспортер, боеприпассен складне тата инженерла пурлăх складне тытса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем Киевпа Житомир хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх çав тери хăвăрттăн малалла куçса пырса, Здвиж шывĕ урлă каçнă та Киев облаçĕнчи Макаров ятлă район центрне тытса илнĕ. Çавăн пекех тата Бышев, Обухов ятлă район центрĕсене тата халăх пурăнакан ытти пунктсене тытса илнĕ. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кӳнĕ. Фастов чугун çул тĕввинче тата Васильков станцинче нимĕçсенчен пысăк армейски складсем тытса илнĕ. Пĕр аэродромра пирĕн çарсем нимĕçсен юсавлă 15 самолетне, горючи складне тата авиабомбăсен складне тытса илнĕ.

* * *

Керчь çурутравĕ çинче пирĕн çарсем плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Керчь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕç пехотин пĕр полкĕ 15 танк пулăшнипе 4 хутчен контратака тунă. Пĕр соединенин гвардеецĕсем тăшмана каялла ывăтса янă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 6 танкне пĕтерсе тăкнă, 800 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Ытти участоксенче те тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă. Тăшмана пысăк çухату кӳнĕ.

* * *

Невель хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, вăйлă тĕреклетнĕ пунктăн хĕррине вăркăнса кĕрсе кайнă. Тепĕр участокра нимĕçсем, хăйсен унччен çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланса, хаяр контратака пуçласа янă. 5 сехет хушши пынă çапăçура совет боецĕсем 500 гитлеровеца вĕлернĕ, вара тăшман каялла чакнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Литовец партизанĕсен отрячĕ тăшман пехотин колоннине сасартăк тапăннă. Алă вĕççĕн пуçланса кайнă тытăçура совет патриочĕсем гитлеровецсене аркатса тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Çав отрядри партизансем тепĕр укшăнĕ чугун çула 49 тĕлте сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав участокра поездсем çӳресси темиçе талăка чарăнсаларнă.

* * *

Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă доклад пирĕн Тăван çĕршывăн хулисемпе ялĕсенчи халăха питех те хаваслантарчĕ. Рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсем хăйсем юратакан çулпуçăн докладне сӳтсе-явнă чухне пурте пĕр çын пек пулса çапла калани: эпир хамăрăн мĕнпур вăя Сталин юлташ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртме паратпăр, тенĕ.

Кăнтăр-Хĕвелтухăç чугун çулĕ çинчи Придача станцийĕнче ĕçлекенсен митингĕнче çул мастерĕ стахановец Карасев, митинга пухăннă мĕнпур халăх шухăш-кăмăлне паларса, çапла каланă: «Сталин юлташ чугунçул транспорчĕн ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Çакă вăл пире хамăр вăйсене тата икĕ хут ытларах ӳстерсе ĕçлеме хушать. Октябрьти революци праçникĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура пирĕн сколоток пĕррмĕш вырăн йышăнчĕ. Нимĕçсем ишсе хăварнă чугун çул хуçалăхне эпир пĕтĕмпех юсаса çитертĕмĕр. Эпир малашне те хамăра пана производствăллă задание 200 процентран кая мар тултарса пырăпăр. Çакăн пек ответлетпĕр эпир Сталин юлташа».

Ростов облаçĕнчи Пролетарское станцири «Красная заря» колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Гребенников юлташ çапла каланă: «Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем пирĕн колхоза тĕппипех пĕтерсе лартрĕç. Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă тĕле эпир хамăр колхоза пĕтĕмĕшпех юсаса çитертĕмĕр: çĕнĕ витесем туса лартрăмăр, 250 тонна силос хыврăмăр, 500 гектар кĕрхи тырăсем акса хăвартăмăр, кĕрхи çĕртме планне пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пирĕн казаксемпе казачкăсем, ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкас вăхăта çывхартас тесе, хăйсен вăйĕсене вунă хут ӳстерсе ĕçлĕç», тенĕ.

Куйбышев облаçĕнчи Похвистневски районри «Канаш» колхоз членĕсен пухăвĕнче колхоз председателĕ Трофимов юлташ сăмах тухса каланă. «Çак çулта,—тенĕ вăл,—пирĕн колхозниксем, лайăх ĕçлесе, вăйлă тырпул туса илчĕç. Эпир государствăна памалли мĕнпур парăмсене пурне те срокчен парса татрăмăр тата планран ирттерсе 100 центнер тырă патăмăр. Сталин юлташ колхозниксен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Хĕрлĕ Çарпа хуласене апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар пĕр чарăнмасăр парса тăрас тесе, вăйлă тырпул туса илессишĕн эпир хамăр вăя хĕрхенмесĕр ĕçлĕпĕр».

Джамбул облаçĕнчи Свердловски районри «Карачу» колхозра сахăр кăшманĕ тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм Казахстанĕпе чапа тухнă Толкумбай Туменбаев юлташ çапла каланă: «Сталин юлташăн доклачĕ—çул кăтартса пыракан çăлтăр. Вăл пире çĕнтерӳ çулĕпе малалла ертсе пырать. Эпир те Казахстан колхозникĕсем хамăр ĕçпе ирсĕр тăшмана Совет çĕршывĕнчен хăваласа кăларма пулăшатпăр, çавна пĕлсе тăма пире питех те кăмăллă. Пирĕн звено кузулта кашни гектар çинчен 573 центнер сахăр кăшманĕ туса илчĕ. Çакă вăл Хĕрлĕ Çар валли планран ирттерсе 1.890 пăт сахăр пани пулать. Эпир килес çул тата вăйлăрах тырпул туса илме сăмах паратпăр».

Тутар республикинчи колхозсем, Сталин юлташăн доклачĕ çине ответлесе, государствăна тырă леçсе пама Хĕрлĕ обозсем организациленĕ. Арск районĕнчи «Спартак» колхоз государствăна тырă памалли плана срокчен тултарнă, унсăр пуçне тата планран ирттерсе 125 центнер тĕштырă панă. Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн колхозниксем государствăна тата 50 центнер тĕштырă сутма пулнă. Çав районрах «Урнайш-баш» колхозри колхозниксем хатĕрлев пунктне тырă хĕрлĕ обозпа леçсе панă.

Çĕнтерӳ патне чĕнекен сăмахсем

СĔНТЕР, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул çитнĕ ятпа чаплă ларусем пулса иртрĕç. Ларăва пухăннă ĕççыннисене радио савăнăçлă хыпар илсе çитерчĕ. Хĕрлĕ Çар Киев хулине ирĕке кăларнине кашнине тулли хаваслăх кӳчĕ.

Район центрĕнчи клуба 500 çынна яхăн пухăннă. Кашни хавaслă, савăнăçлă. Сталин юлташăн докладне радиопа панине пурте шăп пулса итлеççĕ.

— Çулпуç сăмахĕсене итлесен, яланах çĕнĕ вăй-хăват хутшăнать. Çавăн хыççăн вара хамшăн та, фронтри юлташшăн та ĕçлес килет, —тет пир-авăр фабрикинчи стахановка Ванюшкина юлташ. Халиччен вăл кулленхи нормăна тăтăшах 136 процент тултарса пынă. Халĕ, Сталин юлташ доклачĕ çине ответлесе, икĕ хут вăйлăрах ĕçлеме пулчĕ.

Колхозниксем çулпуç доклачĕпе хавхаланса, Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшма тăрăшаççĕ. «Çĕнĕ Юнга» колхоз килес çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ, 1945 çулшăн та 80 процент панă. Çавăн пекех «1905 çулти революци», «Гигант» колхозсем те 1945 çулшăн государствăна аш-какай параççĕ.

М. КАРПОВ.

Çулпуç чĕннине ответлесе

КАЛИНИНО, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Райпромкомбинат коллективĕ Октябрь уявне çулталăкри производство планне ирттерсе тултарнипе кĕтсе илчĕ.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче радиопа Сталин юлташ докладне итленĕ хыççăн рабочисемпе работницăсен производствăри хастарлăхĕ татах та çĕкленчĕ. Çулпуç фронта пулăшма чĕннине ответлесе, райпромкомбинат коллективĕ Сталинла Конституци кунĕ тĕлне çулталăкри плана 150 процент тултарма сăмах пачĕ. Халĕ кунта кашни рабочи çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасшăн тăрăшать.

Б. ШОРНИКОВ.

Ĕççынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVI çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ чаплă ларăвĕ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Кремль двоpецĕн Пысăк Залĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVI çул тултарнă ятпа Ĕççынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партипе общество организацийĕсен тата Хĕрлĕ Çарăн представителĕсемпе, стахановецсемпе, ударниксемпе тата совет интеллигенцийĕпе пĕрле чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Çак историллĕ ларăва çĕршывăн чи лайăх çыннисем — фронтпа тылăн геройĕсем пухăннă. Кремль двоpецĕн аслă залне пынă 3.000 çын хушшинче — ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн членĕсем, СССР Верховнăй Совечĕпе РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем, Халăх Комиссарĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсем, Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсем, промышленноçпа транспортăн командирĕсем, ĕçри паттăрлăхпа чапа тухнă стахановецсем, чаплă ученăйсемпе искуcство деятелĕсем.

20 сехетре президиумра Сталин юлташ курăнса каять. Вăл маршал формине тăхăннă. Унпа пĕрле унăн боевой соратникĕсем — партипе правительствăн руководителĕсем тухаççĕ. Залри çынсем пурте пĕр шухăш-кăмăлпа хавхаланса, ура çине тăраççĕ. Çынсем хаваcланса алă çупаççĕ, пур енчен те аслă çулпуçа саламлакан хумханулла сасăсем илтĕнеççĕ:

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

— Хамăр тăван çĕршыв çĕнтерĕвĕсен аслă организаторне — мухтав!

— Сталин юлташа — ура!

Акă зал шăпланать. Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский, Пронин юлташсем президиумра вырăн йышăнаççĕ. Ложăсенче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн членĕсем, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Ĕççынни Депутачĕсен Мускав Хула Совет Исполкомĕн председателĕ Пронин юлташ чаплă лару уçăлнă тесе пĕлтерет. Вăл çĕнӳ пама ВКП(б) Мускав Комитечĕн секретарьне Черноусов юлташа сăмах парать.

Черноусов юлташ чаплă ларăвăн хисеплĕ президиумне суйлама сĕнет. Вăл пĕррмĕш ята — Сталин юлташăн ятне асăнсан, залра çĕнĕрен тăвăллăн алă çупма тытăнаççĕ. Пурте ура çине тăрса, аслă çулпуçа çĕнĕрен хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Унтан хисеплĕ президиума пысăк çĕкленӳпе Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсене суйлаççĕ. Сталин юлташăн соратникĕсене — партипе правительствăн руководителĕсене чысласа алă çупни залра нумайччен шăпланаймасть.

Пронин юлташ.

— Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVI çул тултарни çинчен доклад тума Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председательне Сталин юлташа сăмах паратпăр, — тесе пĕлтерет.

Çакă вăл залри пĕтĕм çынсем тӳсеймесĕр кĕтсе ларнă самант пулнă. Халех акă вĕсем Сталин сăмахне, иртнĕ çулхи чаплă итогсене Сталин анализ туса панине, пирĕн çарпа халăх геройла вăй хурса кĕрешсе тунă чаплă çĕнтерӳсене Сталин хак панине илтеççĕ.

Сталин юлташ трибуна патнелле пырать. Залра хавaслă саламсен тăвăлĕ вăйлăнрах та вăйлăнрах ӳссе пырать, çак хавaслă тăвăлра пĕтĕм халăх хăйĕн аслă çулпуçне юратни пĕтĕçсе тăрать.

Залăн мĕнпур кĕтесĕсенчен хаваcлăн саламланă сасăсем илтĕнеççĕ.

— Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин!

— Аслă Сталина — ура!

— Сталин юлташа—ура!

Анчах оваци тăвăлĕ шăплăхпа улшăнать. Сталин юлташ доклад тума тытăнать. Яланхи пекех, Сталин сăмахĕсем лăпкăн та витĕмлĕн илтĕнеççĕ. Çав сăмахсене фронтпа тылри нумай миллион боецсем сывлама чарăнса итлеççĕ. Çав сăмахсем пĕтĕм çĕршыва, пĕтĕм тĕнчене сарăлса кашни совет воинĕпе тылри паттăра хавхалантараççĕ, вĕсене нимĕç захватчикĕсене пуçĕпех сĕнтермелли çула кăтартса параççĕ.

— Иртнĕ çул — Октябрьти революци 25 çул тултарнинчен пуçласа вăл 26 çул тултарни таран—отечественнăй вăрçăри улшăну çулталăкĕ пулса тăрать.

Сталин юлташ çав улшăну çулталăкĕ хушшинчи вăрçă ĕçĕсене анализ тăвать: Сталинград патĕнчи çапăçу, Курск патĕнчи çапăçу, Хĕрлĕ Çарăн çуллахи наступленийĕн итогĕсем, нимĕçсен фашистла çарĕ тӳснĕ çав тери пысăк çухатусем тата вăл вăйсăрланни. Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăнрах та вăйлăнрах пыра-пыра çапни. Пĕр миллион тăваткăл километра çити территорие, урăхла каласан, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ совет çĕрĕн ⅔ пайне иртнĕ çул хушшинче Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă.

Сталин юлташ пирĕн тылăн ĕçне пысăка хурса хакланине ларура пулнă çынсем чĕререн кăмăлласа йышăнаççĕ. Сталин юлташ: совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса истоpие кĕрсе юлать, тесе каланă сăмахсем пуриншĕн те паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантаракан чи паха награда вырăнне пулаççĕ. Иккĕленмелли çук, пирĕн рабочи класăн чаплă ĕçне, колхоз хресченĕсен патриотизмне, транспортри рабочисемпе служащисен тава тивĕçлĕ ĕçне, пирĕн интеллигенцин тăван çĕршыва чĕререн парăнса туса пыракан ĕçне çулпуç питех те пысăка хурса хаклани çĕршывра патриотла пуçарулăха татах та ытларах çĕклĕ, совет çыннисене вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме татах та ытларах хавхалантарĕ, çаксем вĕсем вара çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çарăн вăйне вунă хут ытларах ӳстерĕç.

Сталин юлташ Совет Союзĕнчи халăхсен вăрçăри пур йывăрлăхсемпе тĕреслӳсене те тӳссе ирттернĕ туслăхĕ çинчен, большевиксен партийĕн çав тери аслă организаторла ĕçĕ çинчен, партин совет çыннисен мĕнпур вăйĕсене пĕр çĕре пĕтĕçтерсе пĕр тĕллев патнелле ертсе каякан ĕçĕ çинчен, совет государствипе совет стройĕ иксĕлми çирĕп пулни çинчен калать.

Сталин юлташ малалла Гитлера хирĕçле коалици тĕреклленсе пынине, фашистла блок арканма пуçланине кăтартса парать.

Сталин юлташ пирĕн совет правительстви хамăрăн союзниксемпе пĕрле лартакан задачăсем çинчен каланине чаплă ларура пулнисем пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Çав задачăсем вĕсем — Европăри халăхсене фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларасси, ирĕке тухакан халăхсене хăйсен государство йĕркине тăвас тĕлĕшпе ыйтăва хăйсем тĕллĕн татса пама тулли правăпа ирĕк парасси, фашистла преступниксене вĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн тавăрасси, Европăра Германин çĕнĕ агресси тума нимĕнле те май паман йĕрке туса хурасси, Европăри халăхсем хушшинче экономикăпа политика тата культура тĕлĕшпе пĕрле ĕçлессине нумай вăхăтлăха йĕркелесси пулса тăраççĕ.

Доклада вĕçлесе, Сталин юлташ çакăн пек итог тăвать: эпир вăрçă ĕçĕсене тĕпренех хамăр çĕршыв майлă улăштартăмăр, вăрçă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патне пырать. Çакăнпа пĕрлех, Сталин юлташ совет çыннисене тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанса, малашнехи йывăрлăхсем çинчен манса кайма кирлĕ марри çинчен çине тăрса асăрхаттарать.

«Çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ. Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ».

Тăшмана сывлăш çавăрма парар мар! Тăшмана пуçĕпех çапса аркатас тесе, татах та ытларах вăй хурса çапăçăпăр, ĕçлĕпĕр! Çак шухăш фронтпа тылри сĕнĕ паттăр ĕçсенче пурнăçа кĕрĕ.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне, партизансемпе партизанкăсене, хамăрăн аслă Тăван çĕршыва ырă сывлăх сунса саламланине пĕтĕм зал хаваcланса йышăнать. Пурте ура çине тăраççĕ. Алă çупни татах нумайччен лăпланмасть.

Сталин юлташ патне салам ямасĕнӳ параççĕ.

Саламăн текстне ВКП(б) Мускав хула Комитечĕн Секретарĕ Попов юлташ вуласа парать. Залри çынсем татах пурте пĕр çын пек пулса ура çине тăрса хаваcлăн алă çупаççĕ.

Залăн пур кĕтесĕсенчен те аслă организатора, совет хĕçпăшалне çĕнтерӳсем тума тата пĕтĕм халăха вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме хавaслантарса пыракана саламланă сасăсем, хастарлăн ура кăшкăрнисем илтĕнеççĕ.

Пронин юлташ чаплă лару хупăнни çинчен пĕлтерет. Сталин юлташпа унăн соратникĕсем чаплă ларура пулнисемпе ăшшăн сывпуллашаççĕ, залри пĕтĕм халăх аслă çулпуçпа унăн соратникĕсене нумайччен алă çупса, хаваcлăн саламласа ăсатать. (ТАСС).

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тунă йышăну

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 26 çул тултарнă май, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕ — Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ дипломатиллĕ корпуса йышăннă, йышăнура дипломатиллĕ корпусăн пĕтĕм составĕ пулнă.

Йышăнура тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель заместителĕсем — Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян юлташ, А. Я. Вышинский юлташ, ВЦСПС Председателĕ Н. М. Шверник юлташ, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ адмирал Н. Г. Кузнецов, Маршал Б. М. Шапошников, генерал-полковник А. С. Щербаков, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем В. Г. Деканозов юлташ, С. А. Лозовский юлташ, М. М. Литвинов юлташ, А. Е. Корнейчук юлташ, С. И. Кавтарадзе юлташ, И. М. Майский юлташ, генерал-полковник Ф. И. Голиков, авиаци генерал-полковникĕ Ф. А. Астахов, адмирал Л. М. Галлер, вице-адмирал Г. А. Степанов, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Д. Крутиков юлташ, М. С. Степанов юлташ, Ю. М. Каганович юлташ, Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, Наркоминделăн, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем тата ученăйсем, писательсем, артистсем, Совет Союзĕнчипе ют çĕршывсенчи хаçат-журналсен представителĕсем пулнă.

Ют çĕршывсенче

ИДЕНПА МЕНЕМЕНДЖИОГЛУ ХУШШИНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ КАЛАÇУСЕМ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Каирта Иденпа Менеменджиоглу хушшинче пулса иртнĕ калаçусем çинчен çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден господин тата Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Менеменджиоглу господин 1943-мĕш çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче Каирта тĕл пулса калаçнă. Вĕсем Мускаври конференци результачĕсем хыççăн тĕнчери пĕтĕмĕшле лару-тăру мĕнле тăни çинчен пĕр-пĕринпе калаçса илнĕ. Икĕ министр хушшинчи калаçусем çав икĕ çĕршыв хушшинчи туслăхпа союзлăх пек кăмăллăн пулса иртнĕ».

РУНДШТЕДТ ГИТЛЕР ПАТНЕ ЯНА ÇЫРУ ÇИНЧЕН РЕЙТЕР АГЕНТСТВИ МĔН КАЛАТЬ

ЛОНДОН, ноябрĕн 6-мĕшĕ (ТАСС). Рейтер агентствин Европăра пурăнакан специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин Францири тата Хĕвеланăç Европăри çарĕсен командующийĕ фон Рундштедт Гитлер патне çыру янă. Вăл çапла çырнă: этем ăс-тăнĕ чухлама пултарнă тăрăх, вăрçăра Германия аяла пулчĕ, тенĕ. Çак хыпара Рундштедт çывăхĕнчи çынсем калаcа панă. Рундштедт çав çырура тата çапла хушса çырнă: эпĕ ăнланаймастăп, мĕншĕн Гитлер çĕршыв интересĕсемшĕн хăй вырăнĕнчен хăвартрах тухмасть. Гитлер хăй вырăнĕнчен тухни халăха союзниксен кăмăлне каякан мирлĕ калаçусем тума май пана пулĕччĕ, тенĕ.

Германирен пĕлтернĕ хыпарсем те нумаях пулмасть Аахен хулинче парти конференцийĕ пулса иртни çинчен калаççĕ. Çав хыпарсем тăрăх, Гитлер вăл конференцире пулман. Ăна конференци пуласси çинчен пĕлтермен те. Çак хыпар Германире пĕтĕм халăха тĕлĕнтернĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДРА ĔÇЛЕМЕ çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: экономист, секретарь-машинисткăсем, бухгалтери работникĕсем, кладовщиксем, фотограф.

Чугун çул çинче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекен арçынсемпе хĕрарăмсем кирлĕ: поезд составителĕсем, сцепщик-стрелочниксем, поста тăракан дежурнăйсем, вагон осмотрщикĕсем, çулсене юсакан рабочисем.

Тата токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, кальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительнăй рабочисем, грузчиксем, возчиксем, прачкăсем, подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем кирлĕ.

Арçын е хĕрарăм вахтерсем (охранниксем) кирлĕ. Вĕсем валли общежити пур тата спецтумтир параççĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕ специальноçсем тăрăх переквалификантсене (15 çул тултарнă е унтан аслăрах учениксене) илеççĕ.

11 сехетрен пуçласа 15 сехет çитиччен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, бюро пропусков.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1867 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 81 п. л.